К84.09(Чув)6
М29
Ч-38507



Любовь
МАРТЬЯНОВА

# эп чĕртнĕ вучах

Национальная библиотека ЧР
4-038507

К ф. К84.09(Чув)
М29



Любовь
МАРТЬЯНОВА

# ЭП ЧĔРТНĔ ВУЧАХ

Сăвăсем

Юр

Чăваш кĕнеке издательстви
Шупашкар — 1982

84.3 ЧУВ
М 29

ПРОВЕРЕНО
2010

4-38507
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

**Мартьянова Л. В.**
М 29 Эп чӗртнӗ вучах. Сӑвӑсем.— Шупашкар, Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1982, 64 с. 10 п.

Любовь Мартьянова сӑввисем хаҫат-журналта час-часах пичетленеҫҫӗ. «Эп чӗртнӗ вучах» — поэтессӑн пӗрремӗш кӗнеки. Автор пурнӑҫри пулӑмсене хӑйне евӗрлӗ курма, сӑнарласа кӑтартма ӑста.

М $\frac{0763-019}{136(03)-82}$ 94—82 4803010200

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1982 ҫ.

## ÇИЧĔ ÇУТĂ ĔМĔТ, ĔМĔРĔМ—ПĔРРЕ, ХĂШ ĔМĔТПЕ ĔМĔР ВĔÇНЕ ТУХĂП-ШИ?!

### АСĂНМАЛĂХ

Асăнмалăх параççĕ туссем
Çĕрĕсем.
Кĕнеке те параççĕ хăшсем.
Тутăрсем, чĕлĕмсем...
Килĕшетĕн-ши,
Парăп сана сăвăсем?
Тен, илемсĕр вĕсем...
Пурпĕрех — чĕререн тухнисем.
Сăвăсем!
Маншăн хаклă вĕсем!
Çĕннисем, киввисем...
Килĕшетĕн-ши,
Парăп сана сăвăсем?
Сăввăмпа эп сана
Парăп хам чĕреме,
Парăп ĕмĕрĕме!
Сăвăсен йĕркинче пулĕç
Ман ĕмĕтсем,— иртнисем, умрисем...
Килĕшетĕн-ши, парăп сана
Сăвăсем?!

* * *

Çĕр те çичĕ юрă, çитмĕл çичĕ çул,
Хăш юррипе хăш çул хĕрне пырăп-ши?

Çитмĕл çичĕ кăмăл, çичĕ тĕрлĕ ĕç,
Хăш кăмăлпа мĕнле ĕçне тăвăп-ши?

Çичĕ çутă ĕмĕт, ĕмĕрĕм — пĕрре,
Хăш ĕмĕтпе ĕмĕр вĕçне тухăп-ши?

* * *

Хисеп те кирлĕ.
Пуç касăртса çӳреме мар,
Ял хушшинче ялла пулма,
Ятлă çынна сăмах хушма
Хисеп те кирлĕ.

Телей те кирлĕ.
Саркаланса пурăнма мар,
Çак пурнăçа хитре тума,
Пур парăма туйса тăма
Телей те кирлĕ.

Хăват та кирлĕ.
Кăкăр çапса çӳреме мар,

Чун туртнине чӑна хума,
Ӑс хушнине туса пыма
Хӑват та кирлӗ.

* * *

Тӗнче анлӑ тенине илтсен,
Алтӑр илтӗм,
Ҫав анлӑха ярас пек алтӑра.
Ӑсрӑм-ӑсрӑм та ӑнлантӑм:
Кӗрес ҫук тӗнче ман алтӑра.

Ӗмӗр вӑрӑм тенине илтсен,
Вӗрен илтӗм,
Виҫес терӗм ҫыннӑн ӗмӗрне.
Виҫрӗм-виҫрӗм те тӗлӗнтӗм:
Нимӗнпе виҫеймӗн халӑх ӗмӗрне!

* * *

Анне!
Ятласам мана, ятласам,
Ыр ятпа ҫӳреме, пурӑнма
вӗренем.
Ӑнлантар мана, ӑнлантар,
Ҫынсене тӑнласа, шарламасӑр тӑма
вӗренем.

Пурнăç!
Кĕрештер мана, кĕрештер,
Ултава çĕнтерсе, тĕрĕс çул тупма
вĕренем.

* * *

## *ПАРĂМ*

Вăй пĕтсен, сулăнатăп, ÿкетĕп.
Сăнă мар, айван çил те ун чух çĕнтерет.
Вара... Пулăшас тĕллевпех çав, пĕлетĕп,
Çĕр-анне вăйлăх шывĕ ярса ĕçтерет.

Малтан — чĕреме, чĕре — ÿтĕме,
Ак ăçтан пуçланчĕ ман парăм, туятăп.
Ал усса ларас мар. Вăйăм пур ĕçлеме.
Çĕр-анне умĕнче пуçăма эп таятăп.

## *ЮРАМАСТЬ ЮЛМА*

Туссем ман лапталла вылятчĕç.
Атте калатчĕ: тух-ха урама,
Унта паян телей пайлаççĕ,
Асту, телейсĕр юрамасть юлма.

Тухса чупаттăм та — ытла аванччĕ,
Нимскер те кирлĕ мар мана унта.

Атте кайран вăлтса ыйтатчĕ:
Пайларĕç-и, кăтарт-ха, кил кунта.

Пайлаканни килмен пуль, теттĕм,
Ыйтма та маннă, ан ятла.
Айван пуçпах кăшт тĕшмĕртеттĕм:
Ман пурте пур, тата мĕн ыйтмалла?

Ӳссен, яш-кĕрĕмсем ĕçе васкатчĕç.
Атте калатчĕ: каç-ха улăха,
Унта паян телей пайлаççĕ,
Ĕçре тупни — пин хут паха.

Мĕн илтнине ăса хурса утас-и —
Тăван яла килеп инçе çултан.
Хирĕç тухса атте ыйтас пек:
Пайларĕç-и, кăтарт-ха, кил кунта.

Тавах, атте, ăнлантăм сăмахна:
Телейсĕр юрамасть юлма.

* * *

Ятлă çыннăн ятлăхĕ хулпуççи çинче.
Çавраçилĕ килет те вĕçтерсе каять.
Ятсăр çыннăн ятсăрлăхĕ чунĕ тĕпĕнче.
Çынни ӳксе вилсен те, çумĕнчех юлать.

* * *

«Çăкăр умне пырсан —
Пуçа таяççĕ.
Ќăкăр çумне тытса
Ќасаççĕ.

Пуç таймасан —
Ăс тайăлать,
Пурнăç тени
Сая каять».

Ватăсем çапла калаççĕ.
Ватăсем пĕлсе калаççĕ.

* * *

Хура Шурра калать:
«Мана тав ту,
Эп пулмасан —
Хăв шуррине туймастăн!»

Суя Чăна калать:
«Мана тав ту,
Эп пулмасан —
Хăв чăннине туймастăн!»

Ҫасĕ Ҫуна калать:
«Мана тав ту,
Эп пулмасан —
Хăв ҫуттуна туймастăн!»

Ман мĕн калас?
Хам камне пĕлсессĕн,
Ҫама тав тăвас?

* * *

Эп тунă йăнăшсемшĕн
Мана эс айăплатăн.
Эп айăплă, эп айăплă, мĕн калăн...
Анчах асту!
Ман йăнăш
Куҫу тĕлне пулман пулсассăн,
Ҫав йăнăшах манран малтан
эс хăв тăваттăн.
Мана тав ту!

* * *

Вĕренесчĕ:
Ҫын шухăшне куҫпа вулама,
Ун кăмăлне туйăмпа ăнланма.
Вĕренесчĕ:
Туспа тус пулма,
Тăшманпа — ҫапăҫма!

* * *

Ултавлăх...
Ăçтан эс пуçланнă,
ăçтан таврăнан?
Кампа эс туслашнă,
кампа пĕртăван?
Сан пур-и пуласлăх?
Ăçта пурăнан?
Мĕскершĕн сана
тахçанах çĕр çăтман?

* * *

Кĕвĕç çынсемшĕн
Ман пĕчĕк çеç телейĕм
Çĕр пысăкăш,
тĕнче пек курăнать.

Кĕвĕç çынсемшĕн
Тем пысăкăш инкекĕм
Ытла та пĕчĕккĕн,
йĕп куç пек туйăнать.

* * *

Суя сăмахсем каласа
этеме сутиччен —
Чĕлхесĕр пуласчĕ.

Çĕре хытарса
ахаль çӳриччен —
Урасăр пуласчĕ.
Çĕршывăма манса,
юта савиччен —
Чунсăр пуласчĕ.

## *ШУРĂ-ШУРĂ КĂВАКАРЧĂН*

«Шурă-шурă кăвакарчăн,
Ма вĕçетĕн пĕр-пĕччен?..» —
Тенине эп астăватăп
Чăваш халăх юрринчен.
Ахаль мар ун пек юрланă,
Пулнă, пулнă вăл сăлтав.
Тăлăха нумай хăварнă
Урнă вăрçă, курнă çав...
«Шурă-шурă кăвакарчăн,
Ма вĕçетĕн пĕр-пĕччен?..»—
Кукамай çапла юрлатчĕ
Чунĕ хытă кӳтнĕрен.
Шурă-шурă кăвакарчăн,
Тен, хăй пулнă кукамай.
Юрăпа кăшт йăпансассăн,
Чунĕ каннă хăйне май.
Упăшки те... эс куратăн,
Пĕр хыпарсăр... тупăнман.

Шурă-шурă кăвакарчăн
Эсех мар-ши, кукамай?!

## *ПĔЛЕТĔП ЭП*

Этем — тымар ярать çак пурнăçа.
Вăй илнисен тымарĕ те шалта, тĕреклĕ.
Ман çиелтех, тӳрех курнать куçа —
Ќасса-хуçма та меллĕ.
Çавах, пĕлетĕп эп: телей сунса
Ыр тăваканĕ те, шанса тăратăп, пулĕ,
Ӳкме тăрсассăн та, алне тăсса,
Çĕн вăй парса тĕреклĕ!

* * *

Эп хам хаваслăха
Шалт! питĕрсе хурса,
Ачашласа та йăпатса
Усрамастăп.

Эп хам талпăнăва
Шеп сăпкана хурса,
Ачашласа та лăпкаса
Çывăрттармастăп.

Утатăп шав хаваслanса,
Шав талпăнса.

* * *

Хăшсем — çынсен чунне кĕреççĕ.
Ыйтмасăр кĕреççĕ,
Шаккамасăр.
Хирĕç-и çын е кĕртесшĕн —
Ыйтмаççĕ вĕсем,
Кĕреççĕ.
Вара...
Хăйсене кирлĕ пек
Иртĕхеççĕ.
Силлеççĕ...
Хăшсем — çынсен чунне кĕреççĕ.
Ыйтмасăр кĕреççĕ...
Ыйтмасăр —
Этемĕн чунне
çӳпleççĕ.

* * *

Шăнса кайнă этем хурăна касса ячĕ.
Унта вырнаçнăччĕ пăлан, ав, пăрулама.
Тарасшăнччĕ. Пултараймарĕ çав.
Йăванчĕ...
Халсăрланнă. Ĕлкĕреймерĕ пăрăнма.

«Кама кам» теекен шухăшпа пурнаймастăп;
Ыр кăмăлпалах-çке хăш чухне хур тăван.
...Хушăран умри кăвайтпала ăшăнаймастăп;
Курăнать куç умне çав юнланнă пăлан.

## *ÇЫНСЕМ ПĔРЛЕ ПУЛАÇÇĔ*

Çынсем пĕрле пулаççĕ!
Чун туртăмĕ теесшĕн-и ăна?
Пĕрле пулса,
тепĕр çынна «çиеççĕ»
Қурмасăрах ăна-кăна.

Çынсем пĕрле пулаççĕ!
Чун туртăмĕ теесшĕн-и ăна?
Пур вăхăта сая ярса,
Қаçса кайса темрен кулаççĕ,
Пĕр-пĕр ахаль сăлтав тупса.

Çынсем пĕрле пулаççĕ!
Чун туртăмĕ теесшĕн-и ăна?
Укçа пухса,
ума сăра лартаççĕ,
Паянлăха мухта-мухта.

Çынсем пĕрле пулаççĕ!
Чун туртăмĕ теесшĕн-и ăна?
Таçта пырса,
Ытахальтен сăмах параççĕ,
Шăла çыртса, куçа хупса.
Чун туртăмĕ тесе ан калăр-ха, тархасшăн
Пĕр чĕрене вакла-вакла.
Ĕçре вăл пултăр хисеплĕхре, ахальшĕн
Пуш сăмаха мăкпа мăкла.

* * *

Хăшпĕр çынсем шавах чееленеççĕ:
Ури шуса ÿксессĕн те,
«Туя илмешкĕн пĕшкĕнсеччĕ»,— теççĕ,
Тÿрре тухма шыраççĕ темĕн те.

* * *

Такăнсан —
ÿкнĕ тесе ан шутлăр,
Чарăнсан —
вăйсăр тесе ан кулăр,
Йăнăшсан —
пĕтнĕ тесе ан калăр.
Такăнмасăр —
утма çук,
Чарăнмасăр —
çитме çук,
Йăнăшмасăр —
пурнăç çук.

* * *

Вĕçсе пăхма пулать.
Анчах, çитес çĕре
Вĕçсе çитме мĕнле-ши?

Вĕçсе çитме пулать.
Анчах, тăвас ĕçе
Тытса тума мĕнле-ши?

## *АСĂРХАТТАРУ*

Çуркунне ачасем суя лакăм тăваççĕ,
Асăрхан, асанне, терĕм эп пĕринче.
Вăхăта айван чух минутпа çав шутлаççĕ:
Çирĕмре халь тăрап асанне умĕнче.

Çуркунне чунăма хăйне майлă пăлхатрĕ,
Пур илтен сăмаха ĕненес пек туйнать.
Такам вĕçсĕр савса,
хăлхаран пăшăлтатрĕ,—
Çут тĕнче çутăрах ун пек чух курăнать.

Ултав çук, суя çук,— пурте-пурте
пит лайăх,
Уйрăлу, улшăну, тарăху вучĕ çук.
Пур хаваслăх, пур çутă пуласлăх-малашлăх
Çурхи çамрăк чĕре çирĕмре пулнă чух.

Асăрхан: çуркунне суя лакăм чаваççĕ,
Пăшăлтатрĕ ытарлăн кайран асанне.
Тав ăна, ыррине ырăпа тав тăваççĕ...
Асăрхантăм: чăммарăм ултав лакăмне.

* * *

Эс, тутăх, мĕншĕн
Хĕçтимĕре часах илетĕн,
Хăшпĕр çынсен суя сăмахĕсене
Илейместĕн?
Хупласчĕ сан
Мĕнпур ултав-элеке.

Эс, çĕрĕк, мĕншĕн
Йывăçсене часах витетĕн,
Хăшпĕр çынсен асапĕ-хурлăхне
Витейместĕн?
Çĕртесчĕ сан
Мĕнпур асап-инкеке.

* * *

Шурă парăс — ĕмĕт,
Шухăш — лăпкă çил.
Вĕçсĕр тинĕс — ĕмĕр,
Эсĕ — савнă кил.

ч-38507
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

* * *

Чĕрене алăк пек
Çаклатса эп кĕреймĕп.

Питĕреймĕп ăна çăрапа.
Каламастăп:
«Ку кĕтĕр,
Ку пачах та кирлĕ мар мана...»

Сăлăп çуккă унта,
Килĕр, кĕрĕр.
Ман пуриншĕн те хатĕр
Ăш кĕтес, ăш сăмах.

Анчах атăсăр кĕрĕр,
Хыт такансăр,
Çӳп-çапсăр...
Хырса тасатса
Шăлма çук çав ăна шăпăрпа.

* * *

Ыйтса илес —
ыйтса илме çук.
Тытса илес —
тытса илме çук.
Чĕнсе илес —
чĕнсе илме çук.
Вĕсен хăйсен йĕрки.
Вĕсем: ĕненӳ,
юрату
тата пурнăç.

* * *

Пĕрре çеç мар эп курнă:
Чул шăтарса тухать те курăк
Кăшт хĕвелпех шанать,
Типет вара, ванать.

* * *

Кĕсменсĕр кимĕ юхрĕ.
Каласа пĕтереймен сăмах пек,
Ĕненме пăрахнă этем пек,
Хăравçă кулă пек.

Нихăçан каялла таврăнми,
Курăни-курăнми,
Никама пулăшма хăяйми
Кĕсменсĕр кимĕ юхрĕ.

Пурнăç пек шавлакан, пăтранан тинĕсре
Кĕсменсĕр кимĕ уссăр юхрĕ.

## *ТУПĂН-ШИ?*

Мĕскершĕн йĕретĕн?
Çухатнă алса?
Эх, çамрăк çав, çамрăк,

Пĕлмест пурнăçа.
Алса çĕтернишĕн
Ҫирлех-ши ĕнтĕ макăрма?
Пулать пурнăçра —
                    çухату,
Ун чух —
          кун пек-и пулать
                              çуйхашу...
Алса эс çĕтернĕ,
Тен, тупăнĕ,
Аннӳ, тен, парĕ илсе çĕнĕрен.
Мĕскер эс алсашăн
Таттисĕр йĕрен?!.
Пурнан пурнăçра санăн ĕмĕт çĕтсен,
Сан пата пыракан хĕрӳ шанчăк
                              çĕтсен,
Тупăн-ши?..
. . . . . .
Эс — алсашăн йĕрен.

* * *

Сарă хĕрсем иртеççĕ,
Ĕçрен киле килеççĕ.
Мучи курать, йăл кулать,
Ват кинемееех мухтать:

«Хĕрĕсем маттур та,— тет,—
Ҫарчăк пекки çуккă çав».

Яш качча́сем утаççĕ,
Ялти клуба васкаççĕ.
Ҫинемей те аса́рхать,
Хайĕн старикнех мухтать:

«Ҫаччисем маттур та,— тет,—
Старик пекки çукка́ çав».

Яшсем килеççĕ ва́йа́ран,
Старикпе карча́к — çыва́рман.
Ват кинемей ча́лха çыхать,
Хавас мучи та́мра калать.

* * *

Ыттисемпе пĕрлех вĕçетчĕ.
Ва́л ыва́натчĕ,
ва́й илетчĕ...
Ҫая юлсан хуса çитетчĕ.
Иртсе каятчĕ,
каллех юлатчĕ...
Нумай юлман, çитесчĕ, тетчĕ.
Юлашкинчен такам пĕлтерчĕ:
«Сунарçа́ печĕ.
Хурака́ш ӳкрĕ...»
Ҫак илеме мĕн-ма пĕтерчĕ?
Ун выра́нне тепри çĕкленчĕ.

Ун çулĕпех,
çав ĕмĕтпех...
Çитес çĕре çитесчĕ, терĕ.

* * *

Кашни утăма
Шикленсе çеç пуссассăн,
Кирлех-и утни?

Кашни сăмаха
Шикленсе каласассăн,
Мĕн-ма калаçни?

* * *

— Пĕлтĕн-и эсĕ, пĕчченлĕх,
Никам та, никам та савмасть вĕт сана.

— Пĕлетĕп ăна эп, пĕлетĕп,
Эп хам та савман нихăçан никама.

— Кала-ха тата, пĕчченлĕх,
Мĕн-ма пысăка эс хуратăн хăвна?

— Вăя кăмăлпа эп виçетĕп,
Хăть кама та пултарăп авма.

— Шутла-ха кăштах, пĕчченлĕх,
Авма пултарсан та, пултараймăн хуçма?!

— Пултаратăп ăна та, пултарнă,
Этем те хăш чух пуçлать найкăшма.

— Апла-ха иккен, пĕчченлĕх,
Ширатăн çынра ыратан вырăна?

— Шыратăп, ара, тупатăп,
Çав вырăнтан пуçлап кăшлама.

— Тăхта-ха кăштах, пĕччеплĕх,
Этем йăшмасан, чăтсан, чакмасан?

— Ун чух, пытармастăп, калатăп,
Эп хам та пуçлатăп хăрма.

* * *

Таçта, шалта,
Чун-чĕрене хĕссе,
Йĕрке çине йĕрке кĕрсе,
Çуралчĕ сăвă.
Тен, кулăшла та пулĕ-ха
Сире,
Тен, хатĕр пулĕ тиркеме.
Эп вара

Хура курак хăй чĕппине:
«Хура пулсан та — хамăн»,
тенĕ пек,
Савнатăп.
Чăнах та, вăл шăп
Ман пек.

* * *

Айван чух шутлаттăмччĕ:
Çунат пур-тăк — вĕçмеллех,
Çуната вĕт çавăнпа сараççĕ.

Айван чух шутлаттăмччĕ:
Ура пур-тăк — утмаллах,
Ахальтен мĕн-ма ура параççĕ.

Халь ĕнтĕ ыйтмастăп,
Халь хамах чухлатăп:
Манăн та пуç пур та —
Пурпĕр йăнăшатăп...

* * *

Ман çине пăхать те пурнăç
Ахăлтатса кулать.
Куççуль витĕр, шăла çыртса

Ахăлтатса кулать.

Эпĕ те кулатăп ăна хирĕç.
Ним пулман пек,
Куççуль витĕр, шăла çыртса
Ахăлтатса кулатăп.

Пĕр-пĕрне чăнах та ăнланатпăр.
Хирĕç пăхса, шăла çыртса,
Куççуль витĕр
ахăлтатса кулатпăр.

## *ХУМСЕМ... ХУМСЕМ...*

Хумсем... Хумсем...
Мĕн шыраççĕ вĕсем? Мĕн кĕтеççĕ?
Çак касхи шăплăхра
Камсене-ши чĕнеççĕ?
Кам пĕлет, тен, вĕсем
Шурă парăспала киленеççĕ,
Çăмăл кимĕ çинчи йĕкĕте илĕртеççĕ.
Ахăртнех, çав хумсем
Çăлтăрсен ушкăнне
Хăйсемпе вылямашкăн чĕнеççĕ...
Ахальтен-и вĕсем
Çӳл тӳпе çутине
Кунĕн-çĕрĕн пăхса киленеççĕ.
Мĕн кĕтеççĕ вĕсем, мĕн хистеççĕ?

* * *

«Хăрнă,— терĕ,—
йывăç хăрнă» — терĕ.
Ĕнентерчĕ шăпчăк тăрăшсах.
Эп пымарăм,
эп ĕнентĕм пулĕ,
çĕн хунав çинчен манса кайсах.

* * *

Ылтăн тупрăм, терĕм, ылтăн, терĕм,
Çула тухсан, пĕрле илсе çӳрерĕм.
Çын курасран, çухаласран шиклентĕм.
Пĕччен чухне айванланса пăхса килентĕм.

Паян ак ӳкрĕ те саланчĕ.
Вăт инкек:
Ку ылтăн мар, сăрланă тăм иккен.

## *ИККĔЛЕНӲ*

Шăнса хытнă алла тăсса эп тăратăп.
Вĕçсе ӳкрĕ унта вĕлтĕрти юр пĕрчи.
Шеллесе-ши ăна, антăхса йăлăнатăп:
Ан ирĕл, ан ирĕл, кур кăштах кун çути.

Пăшăлтатнă сасса, тен, хăй майлă ăнланчĕ,
Тен, чунри кăвара-ши телейĕн туйса,
Алăрах, алăрах, самантрах вăл шывланчĕ,
Сăхса кĕчĕ ӳте вăл, асаплăн кулса.

Ăнланмарăм вара:
те салхуллă ун чух тăмаллаччĕ.
Алăрах куçне хупрĕ-çке-ха юр пĕрчи?
Те, хавасла кулса, малалла утмаллаччĕ,
Эпĕ чĕрĕ, ман юн та вĕри!

## *КĂВАЙТ ÇУНАТЬ*

Вучахра пур-çук вăйне пухса,
Кăвайт çунать.
Пăшăлтатса та антăхса
Асапланать.

Асапĕнче — хура та тĕпсĕр тӳпере
Çут çăлтăрсем кулаççĕ.
Асапĕнче — çил ачипе вутпуçĕ тĕтрере
Пытанмалла выляççĕ.

Вучахра, пур-çук вăйне шанса,
Кăвайт ялтрать.
Çатăртатса, кăмрăкланса,
Телейлĕ асапне манса,
Сӳнме хăрать.

* * *

Вăрман. Уçланкă. Тĕлĕрет тавралăх,
Пĕр йывăçĕ ӳксен, тепри тăрать.
Анчах пĕлетĕн-и, тĕнче тени, мĕн калăн,
Ӳкнишĕн те, тăнишĕн те — пĕрре пулать.

Шавла, тавралăх, канăçна манса
Шавла, вăрман, чĕр чуншăн савăнса.
Шавла хăрнишĕн те, пурне те ăнланса,
Пĕр ӳкнĕ тĕмĕ те  ан юлтăр манăçса.

. . . . . . . . . .

Çак пурнăça иртни тăрать тытса!

## ТИХА

*Т-на.*

Ĕшеннĕ лашасем кичеммĕн тĕлĕреççĕ.
Таçта улать, ав, кашкăр антăхса.
Ват йывăçсем шав ахлатса илеççĕ,
Юлашки çул илемлĕхе туйса.

Тиха чупать. Çăп-çăмăллăн, хавассăн.
Темрен аван çав амăш хӳттинче.
Сикет, сикет... Курăк ăшне чăмассăн
Кĕлеткипе. Сенкер инçет — ун умĕнче.

Ниме вăл ăнланмасть. Вăл çамрăк, вăйлă,
Тĕнче те уншăн çеç пек туйăнать.

Туртман тихан туртийĕ çуккă — паллă.
Вăл хăйпе хăй хавасланса чупать.

Ĕшеннĕ лашасем кичеммĕн тĕлĕреççĕ,
Шарт сикнĕ пек илеççĕ чĕтренсе.
Сĕнксе тăраççĕ те — пуçне ухаççĕ,
Асаплă шăпипе пуль килĕшсе.

...Чарас тесе вара аса илмеççĕ
Шуй тихана çаксем вăхăтлăха.
Қайран хăех ăнланĕ-ха, тен, теççĕ
Туртса курсан тем йывăрăш лава.

* * *

Тахçантанпах юратнă кĕвĕ...
Сассăр юрă.
Шăплăх ун кĕвви.
Чĕре юрлать теççĕ, ĕненетĕн-и?
Çав юрă —
сассăр юрă,
шăплăх — ун кĕвви.

## *ҚУЛĂР МАНРАН!*

Мĕскер?
Қулас килет санран тетĕр?

Ахӑлтатса кулӑр,
Ҫасса кайса йӑваланса кулӑр.
Таса уйра вӑрман курать, тейӗр,
Шыв тӗпӗнче сукмак шырать, тейӗр,
Уйӑх патне пусма лартать, тейӗр!
Сассӑр ҫитсен,
Ҫӑмӑл пулсан,
Ҫулӑр манран,
Ҫулӑр!
Ҫӗвӗҫнипе кулӑр,
Тарӑхнипе кулӑр.
Эп курнине — эсир кураймӑр!
Эп тупнине — эсир тупаймӑр!

## *ШӐПЛӐХ*

Шӑплӑх — пуян сасӑпа.
Юрлама пултарать вӑл санпа,
макӑрма.
Пӗчченлӗх пырсан сан умна —
калаҫма.

Пултарать вӑл сана йӑпатма.
Шӑплӑх — пуян сасӑпа.
Ан та хӑйӑр манпа тавлашма.
Ӗненместӗн? Айван мар эп суйма.
Ӑшра йывӑр чухне —
калаҫатӑп унпа...

Çывăрма вырттарать вăл мана
юрăпа,
Юрăпах вăл ыйтать вăранма.
Шăплăх — пуян сасăпа.

Анчах пĕл эс ăна — тăнлама.

* * *

Пурнăç —
шурлăх пек вăл
хăш чухне.
Хыт çĕр тесе пусан та —
майĕпенех путан.

* * *

Чĕрем
Чул татăкĕ пулсассăн,
Эх, пурăнăттăм,
Çĕр çавăрăттăм.
Çын шухăшне пĕлес çукчĕ,
Асапланас хуйхи çукчĕ...

Чĕрем, тăван, сив чул мар çав.

Пурнăç
Шыври сар çу пулсассăн,
Эх, ярăнăттăм,

Эх, пурăнаттăм.
Ĕçлес-тăвас шухăш çукчĕ,
«Парăм» сăмах пуçра çукчĕ...

Пурнăç, тăван, сар çу мар çав.

## ПУЛАÇÇĔ ÇАВĂН ПЕК ÇЫНСЕМ

Пулаççĕ çавăн пек çынсем:
Сывлăх сунаççĕ,
Ăшшăн кулаççĕ те алă параççĕ...
Пулаççĕ çавăн пек çынсем:
Кăшт пăрăнсан,
вăрттăн пăхса кулаççĕ,
юнаççĕ...
Пулаççĕ çавăн пек çынсем:
Çитмĕл те çичĕ питлĕ пулаççĕ.

## КАЛАÇ

Калаç... Эс вĕçĕмсĕр калаç.
Эс саспа мар, пăшăлтатса калаç.
Курмастăн-им, ав, çăлтăрсем çӳлте выляççĕ...
Эс ан хăрат, пĕр сасăсăр калаç.

Калаç, калаç... Эс куçсемпе калаç.
Кичемлĕхне сирсе ярса, эс куçсемпе калаç.
Курмастăн-им, шур хурăнсем çилпе шавлаççĕ...
Эс — ман умра, эс куçсемпе калаç.

Ҫалаҫ, калаҫ... Эс вĕҫĕмсĕр калаҫ.
Эс саспа мар, туйăмсемпе калаҫ.
Ҫурмастăн-им, ҫĕн мăшăрсем умра утаҫҫĕ...
Ан чăрмантар, эс сасăсăр калаҫ.

Ҫалаҫ, калаҫ... Эс куҫсемпе калаҫ,
Эс, тунсăхна сирсе ярса, куҫусемпе калаҫ.
Ҫурмастăн-им, ав, сывлăмпа чечек выляҫҫĕ...
Эс — ман ҫумра, эс куҫсемпе калаҫ.

## *ҪАМРĂҪЛĂХ-ШУҪĂМ*

Майĕпен, майĕпен, ним пулман пек,
ачашшăн
Ҫутă шуҫăм шăвать тухăҫран шуралса.
«Ан юрла, ан юрла ире хирĕҫ хавассăн,
Ҫаҫа хирĕҫ тухать ак куҫҫуль сăрхăнса»,—
Тетчĕ ман кукамай, маншăнах пăлханса.

Чараймарĕ мана кукамайăм, юрларăм,
Тĕнче хăй те юрлатчĕ манпа ăмăртса.
Хавас шуҫăм — манпа пĕртăванăм,
Шутламан пуль хăйне хура каҫ хупласса,
Савăнатчĕ, кулатчĕ мана ăнланса.

Тĕттĕм каҫ сĕмлĕхне каярах асăрхарăм,
Ачаш шуҫăм йĕретчĕ таҫта ăнтăлса.

Ана шеллесе пĕр сăмах каламарăм,
Шухăшларăм. Ансăртран, тем пулса,
Шурă хут çине ӳкрĕ малтанхи ман
тумламăм.

. . . . . , . . .

Майĕпен, майĕпен, ним пулман пек,
ачашшăн.
Çĕнĕ шуçăм шăвать тухăçран шуралса.
«Ан юрла, ан юрла ире хирĕç хавассăн,
Қаçа хирĕç тухать ак куççуль сăрхăнса»,—
Тетĕп эп, мăнука инçетрен сăнаса.

* * *

Лăпкă кӳлĕ, тарăн кӳлĕ,
Ан хумхан эс кăшт çилпех.
Саншăн мар вăл килнĕ пулĕ,
Тен, çӳрет хăй çулĕпе?

Саншăн мар ун-кунăн хутлĕ,
Йĕрĕ, шăхăрĕ çĕрле.
Çула май пек çеç вăл шӳтлĕ...
Ун çулне тек ан йĕрле...

Тарăн кӳлĕ, лăпкă кӳлĕ,
Çыр хĕрри, ак, саншăн çех.
Вăл санпа мĕн ĕмĕр пулĕ,
Эс унпа ан хирĕçех.

* * *

Ҫăштах ăнлантăм пурнăҫа:
Ҫалаҫма вĕрениччен —
Шарламасăр тăма вĕренмелле-мĕн
Утса кайиччен —
Вĕренмелле-мĕн тăма,
Ҫула тухиччен —
Ҫулне суйлама.
Ҫăштах ăнлантăм пурнăҫа:
Ачасем те,
Ҫулма вĕрениччен,
Тытăнаҫҫĕ малтан —
Макăрма.

## *ШĂПЛĂХРИ ЮМАХ*

Шăплăхра шăп юмах
ҫуралчĕ.
Вăл шăппăн тухрĕ те —
ҫухалчĕ.
Эп — хыҫалтан.
Ăна малтан
хĕрлĕ мăкăнь ҫинчи
сывлăмра асăрхарăм.
Ҫаярах — ращари сывлăшра.
Эп сукмакпа пыраттăм,
Вăл — ман умра.

Аякран вăл калать:
Эп кунта.
Пăхатăп та — вăл пĕчĕк кăмпа,
Тем калаçать такампа.
Ыйтатăп хуллен:
Мĕн калаçатăн? Қампа?
Қил хам пата,
Тыт,— терĕ те,
пулă пулса,
чăмрĕ шыва.

## *ПУРНĂÇ*

Пурнăç —
ачалăхра вĕрсе хăпартнă хăмпă,
Пурнăç —
çав хăмпă çурăлнă асаплă самант.
Пурнăç —
малтанхи ăнланса кулнă кулă,
Пурнăç —
кулăпа куççуль пĕрлешнĕ самант.
Пурнăç —
таса та çутă уçлăх çӳллĕшĕ.
Пурнăç —
умри сукмак çинчи çĕр çурăкĕ.
Пурнăç —
хăватлă, асамлă хăлат.

Пурнăç —
çав хăлат аманнă самант.
Пурнăç —
хускану, талпăну!
Пурнăç татах —
тепĕр хут кулнă кулă.
Пурнăç татах —
вăй илнĕ хăлат.

* * *

Çук, ан сӳнтер.
Çунма пуçланă кăвайта
Эс
Ан сӳнтер.

Вăл çунтăр.
Сана ăшăтаймасть вăл, тупата,
Теприншĕн пултăр.
Теприншĕн çунĕ вăл паха,
Хĕмленĕ те чипер.

...Эп чĕртнĕ пĕчĕк вучаха.
Эс
Ан сӳнтер.

* * *

Çулĕ вăрăм, ай, çул вăрăм,
Темĕн чухлĕ тарăн вар.
Йăнăшса çултан кăшт пăрăн —
Қалла тухма çăмăл мар.

Юр çутийĕ — чун çути —
Çутатать те — аптрамасть.
Қилтĕм, ак, кунта çити,
Вĕçĕ пурпĕр курăнмасть.

Çулĕ вăрăм, ай, çул вăрăм,
Ёмĕр утнăн туйăнать.
Пурпĕрех, кичемлĕх, вăрăн!
Шанчăк пур, ураланать.

* * *

Шартламаччĕ, сивĕччĕ.
Қайма тухаттăм.
Қаялла килме ĕмĕтленсе,
Паллă хăвараттăм.
Шартламаччĕ, сивĕччĕ.
Çула çавах тупаттăм.

Шартламаччĕ, сивĕччĕ.
Пыма тухаттăм.

Анне патне çитес тесе,
Чуна параттăм.
Шартламаччĕ, сивĕччĕ,
Çавах пырса кураттăм.

Вăхăт иртрĕ, вăхăт иртрĕ,
Çав паллăсем ăçта-ши?
Пырас пулсан, тухас пулсан,
Çула тупса пулĕ-ши?

Вăхăт иртрĕ, вăхăт иртрĕ,
Анне кĕтни ăçта-ши?
Çитес пулсан, кĕрес пулсан,
«Хĕрĕм» текен пулĕ-ши?

## *ҪАЛАМ-И?*

Эс çитеймен телее тĕллесе,
Таçта та, таçта та çӳрерĕм.
Паянхи кун çитсен те, çавах
«Ним шыраман вăл, ним те курман,
Ахаль çӳренĕ»,— терĕн.

Эс ĕненмен этеме ĕненсе,
Тем тĕрлĕ çунса пуль хĕмлентĕм.
Паянхи кун çитсен те, çавах
«Никама ĕненмен вăл, никама юратман
Хăйшĕн пуранна»,— терĕн.

Эс тупайман тупсăма шыраса,
Çĕр хут хуралса пуль тасалтăм.
Паянхи кун çитсен  те, çавах
«Ним те тупман вăл, ним те туйман,
Уссăр çӳренĕ»,— терĕн.

Халь те пулин калам-и сана?!
Эс çитеймен телее çитсе  куртăм!
Эс ăнланман этемпе эп тус пултăм!
Эс тупайман тупсăма та эп тупрăм!

## *ШУХĂ ШУХĂШ ПУÇРА, ШУРĂ ТУНСĂХ КУÇРА...*

---

### *ÇУХАЛНĂ ЮРĂ*

Пĕрре, улăхра,
Хирĕç пултăм çухалнă юрра.
Илтĕнчĕ вăл шăппăн —
Ачашшăн та лăпкăн...
Çак вăхăтра
Вăл пулчĕ иккен ман çумра.
Эп каясшăн пултăм утса...
Çук, тăхта,
Эп ку юрра
Панă пулнă сана
Сума суса.
Эс —
Çухатнă ăна.
Нумай вăл çӳренĕ
ĕнтĕ аташса...
Юрать.
Айăпламăп сана.
Эс çухатнă манăн юрра.
Халь
Урăх юрă шыра.

* * *

Вăхăт çук пулсан та — çук канăç.
Çак тĕнче илемне тухса кур!
Халĕ çеç пĕр-пĕрне алă пачĕç
Юлашки çумăрпа шурă юр.
Астăватăп: ăшă çумăр çăватчĕ.
Пирĕнтен телейли? Пулманах.
...Çумăра хăть пĕрле ăсатасчĕ,
Хĕллене кĕтсе илĕп хамах.

* * *

Юратăвна кашкăрсене шанса патăн та –
Хыпса çурчĕç.
Хăйсем хушшинче пайласах
Хыпса çурчĕç.

Юратăвна лĕпĕшсене шанса патăн та –
Вĕçсе кайрĕç.
Çăмăлттайлăн йĕрсех, пăлхансах
Вĕçсе кайрĕç.

* * *

Хурлăх пулсан, хурăн лартрăм.
Савнăç пулсан, çăка лартрăм.

Хăш йывăçĕ ытларах?

Шурă хурăн ёшнинче
Тунсăх пуснă хĕр çӳрет.

Çамрăк çăка ёшнинче
Япшар сăнлă яш çӳрет.

Миçе çул-ши, ай, турах?

Вăхăт иртрĕ пулсан та,
Хушша хăва лартар-и,
Хамăршăн мар пулсан та,
Урлă сукмак хывар-и?

Икĕ ёшне пĕр пулса,
Вăрман пулса ӳсчĕр-и,
Савас çынсем тĕл пулса,
Пĕрне-пĕри тупчăр-и?

* * *

Эс маншăн пĕрре мар,
Эс маншăн — хĕрĕх.
Çук, пăлан мар эс, пăлан мар,
Суятăн эс, эс — хĕлĕх,
Ман алăра гитара чух —
эс — хĕлĕх.
Хĕлле эс — юр пĕрчи,
Чи пĕчĕкки, чи илемли,

Хирте — ыраш пусси е
тӑри юрри...
Эс маншӑн пӗрре мар,
Эс маншӑн — хӗрӗх.
Илтетӗп юрӑ — эсӗ юрӑра,
Ҫуратӑп кулӑ — эс кулӑра.
Хӗр чухне халь—хӗрӗх, теҫҫӗ,
Ман вара —
Хӗрӗхре те эс — пӗррех.

* * *

Сӗтел ури авӑнать,
Урай хӑми авӑнать.
Авӑнсан та аптрамасть,
Авӑнсан та хуҫӑлмасть.

Сикӗр, сикӗр! Сикмелле.
Туйӑн туй пек иртмелле.
Мӗншӗн, ара, ташлас мар,
Мӗншӗн, ара, савнас мар?

Яштак каччи япӑх-им,
Сарӑ хӗрӗ ятсӑр-им?
Тӑрӑс! Тӑрӑс! тапар-и,
Ҫӗн мӑшӑра мухтар-и?

Ав, кӗтесри сар каччӑ
Ҫакӑ хӗре саватчӗ.
Шӑлне ҫыртса ал ҫупать,
Хӗрне качча ӑсатать.

Ҡилекенсем — килччӗрех,
Ҡӗрекенсем — кӗччӗрех.
Туя туй пек тӑвӑпӑр,
Ырӑ туя пӑсмӑпӑр.

Сӗтел ури авӑнать,
Урай хӑми авӑнать.
Авӑнсан та аптрамасть,
Авӑнсан та хуҫӑлмасть.

* * *

Ҫунакан вутпуҫне ҫунтӑр тенӗ ҫӗртенех
шыва пӑрахрӑм.
Чӑшӑлтатрӗ, чӑшӑлтатрӗ —
тӗтӗм кӑларчӗ те шӑпланчӗ.
Шыва майӑн юхса кайрӗ аната.
Ҡӗтсе илнӗ ҫынна савас тенӗ ҫӗртенех
манса кайрӑм.
Айӑпларӗ, айӑпларӗ —
алне сулчӗ те лӑпланчӗ.
ним пулман пек утса кайрӗ малалла.
. . . . . . . . .

Ķaçсерен
çав тĕтĕм шăрши куçа кĕрет,
Çĕрсерен
савайман çын кулли тĕлленет.

* * *

Чăннипех, çапла, пĕр каçпа
Такам шаккарĕ алăка,
«Ķĕртместĕп,— терĕм,— сасăпа,—
Халь вăхăт,— терĕм,— çывăрма.
Ķилсем ыран эс — кăнтăрла».
Вăл кайрĕ те — эп тухрăм хыçалтан,
Палласшăн пултăм, мĕн тăван.
Ăнлантăм: çын мар иккен,
Ķу пулнă юрату.
Вăл килессе эп пач кĕтмен.
Ķĕртмеллех çав пулнă, эп ăна пĕлмен.
...Урампа иртет-и, пĕлĕтпе вĕçет —
Шаккамасть халь тин вăл,
Ķĕртмессе пĕлет.

* * *

Ķаллех çав кĕвĕ.
Эсĕ çырнă кĕвĕ.
Çунатланать чĕре:

Те кĕвĕ тĕнчере,
Те хăй, тĕнчи,
Çак çутă кĕвĕре.
Çак кĕвĕре
Чечек те çурăлать,
Юмах çак кĕвĕрех пек
Çуралать.
Такам савса пăшăлтатни,
Шур юр кăчăртатни,
Эс сывлани
Çак кĕвĕ пек янрать.

## *КĔТЕТ*

*Л-на.*

Хуркайăксем иртеççĕ,
Хуркайăксем вĕçеççĕ.
Шурă хурăн тухнă ăсатма.
Ыйтас кăмăл пур ун,
Калас кăмăл пур ун,
Хăю çитмест çавах ал сулма.

Шухă шухăш пуçра,
Шурă тунсăх куçра:
«Тепĕр çул татах килейрĕр-ши?
Çулăр йывăр пулса,
Çулăр вăрăм пулса,
Ют çĕрех эсир иленмĕр-ши?»

Шурă хурăн йĕмест,
Шурă хурăн чĕнмест,
Хĕле хирĕç куççуль ӳкермест.
Юратма вăл пĕлет,
Ĕненме вăл пĕлет,
Пĕр сăмахсăр кĕтет те кĕтет.

* * *

Сар чечексем çинчен калаççĕ тĕрлĕ.
Чăн, маншăн хĕрли мар, сарри çав юрату.
Тен, тахçан-тăр пулнă саррисем те хĕрлĕ,
Тен, вĕсене саратнă уйрăлу?..

* * *

Аслати авăтмарĕ. Çумăр çумарĕ,
Хура пĕлĕт капланса килсессĕн те.
Кĕрхи кун çеç пуçланчĕ ăмăр,
Хĕвел пăхмарĕ, темле кĕтсессĕн те.

Сăмахсем вылянмарĕç. Хирĕçӳ пулаймарĕ,
Куçра хаярлăх палăрсассăн та.
Ик тус кăна халь çывăх юлаймарĕ,—
Чун выртмарĕ, ăш çунсассăн та.

Таçта аякра шартлама хĕл ларнă,
Шур юр çийĕн ик еннелле ик йĕр кайнă.

* * *

Çитмĕл те çичĕ ăстаçа чĕнсе,
кĕпер хывтарăп:
Шухăшунтан
шухăшăма пыран кĕпер.

Çитмĕл те çичĕ ăстаçа чĕнсе,
кермен ларттарăп:
Телейӳпе
телейĕм çеç пурнан кермен.

## *АН ЯТЛĂР*

Ах, ан ятлăр мана, ан ятлăр,
Пĕтĕмпех ăнланатăп хамах.
Кĕрхи кун хĕле хирĕç тухать-тĕр,
Ятлани те халь тин кăлăхах.

Хам çине эп уртмастăп сар пурçăн,
Çуллăма пытаратăп кас-кас.
Уншăн çеç антăхан айван пуçшăн
Ма тĕнче илемне ылханас?!

Çалайман шухăша шăплăх витĕ,
Кĕрхи кун шăннипе пĕр пулса,
Ӳкĕнни те халь тин, йынăшни те —
Пăр купи пек çеç юлĕç тăрса.

Ах, ан ятлӑр мана, ан ятлӑр,
Ятлани те халь тин кӑлӑхах.
Эсир мар, кӗрхи кун шатӑртаттӑр,
Шӑнттӑр ҫеҫ чунӑма хытӑрах.

* * *

Тӗрлӗрен вӗрентеҫҫӗ ҫынсем:
Пӗрисем —
ҫул уҫма,
чӑтма...
Теприсем —
парӑнма,
чакма...
Эс мӗне вӗрентрӗн мана?
Вӗрентрӗн малтан —
юратма,
Қайран —
манма.

* * *

Эп — пӗчӗк юр пӗрчи.
Сан чӳречӳ вара —
ман хӳтлӗх.
Эс сывлани,
Пӑшӑлтатни

Сенкер çутта куçса
Тухать те ман пата —
Кулать,
Кулать...
Каярахпа кёвве куçать.
Эп — ташлатăп.
Эп — савăнăçлă.
Эп — пĕчĕк юр пĕрчи.

* * *

Лĕпĕшсем выляççĕ, тытмалла выляççĕ.
Иккĕш те чăлт-шурă, шурă мамăк пек.
Хăйсемех пĕр пурнăç,
хăйсемех пĕр савнăç...
Çулĕсем çеç уйрăм, санпа манăн пек.

* * *

Çырусем çырмарăн, терĕн...
Мĕн калас?
Çырман — çырман.
Каçсерен эс çывăрсан,
Мĕн-ши çĕрле çурĕ?
Çумăр тетĕн?
Çук, суян.

Çумăр пек тумлам пулса,
Ман сăмахăм çурĕ.
Ёненместĕн?
Ан ёнен.
Эсĕ çывăрнă — илтмен.

* * *

Ман валли ятсем эс
ан шыра.
Атăл акăшĕ эп
пулас çук.
Эп ялан вăл — Эпĕ,—
ан хăра,—
Эс яланлăх Эсĕ пулнă чух.

* * *

Асамат кĕперĕпе
Чупрăм антăм шыв кӳме.
(Тĕлĕкчĕ ку. Кил — тӳпе.
Юлтăн эс мана кĕтме.)

Антăм. Пăхрăм: тӳпере
Çук кĕпер. Пыма инçе:
Эсĕ юлтăн пĕлĕтре.
Эпĕ сансăр — çĕр çинче...

* * *

*Н. З.*

Эс юрлакан юррăн вĕçĕ пулăп,
Юрла, юрла. Пуçламăшĕ — тепри.
Юлашки çаврăмпа сан умна эпĕ тухăп.
Анваскат. Эп — юлашки йĕрки.

Малтанхи те саншăн хаклă, вarrинчи те.
Ҫалаймастăн пĕр сăмах та ман пирки.
Сан шутпа, эп çук пек çĕр çинче те...
Ан васкат. Эп — юлашки йĕрки.

* * *

Тĕтре.
Ҫаллех тĕтре.
Тĕтре ăшĕнче
эсĕ —
шур кĕпепе.
Умрах тесе алла тăсатăп...
Те эс тăратăн,
те эп тăратăп,
Ҫаплах, çав вырăнтах
Сана куратăп.
Тĕтре? Ҫаллех тĕтре?
Ҫук,
тĕтре мар.
Эп —
тĕлĕкре.

## *КАЯН ПУЛСАССĂН...*

Мĕскер калас сана ман,
Мĕн калас?
Йĕрес-и
Е юмах ярас?
Эс мана савманнине пĕлсех
Савса пурнас-и
Е сирĕн хушшăра
Çĕлен пырса ярас?
Мĕскер калас?
Манран ыйтмасăрах
Çу хыççăн
Кĕр çитет,
Кĕр хыççăн — хĕл.
Мĕскер калас сана ман,
Мĕн калас,
Эс те ыйтмасăрах
Каян пулсассăн?..

* * *

Чĕре хĕлĕхне тĕкĕнсе,
Эп юрă кăлартăм.
Ачашшăн вăл тухрĕ,
Çемçе кĕвĕпе...
Ăна танлаштармăн нихçан
нимĕнпе.

Вăл шăплăх пек тарăн,
Тĕнче пек пуян.
Вăл — санăн, вăл — манăн,
Вăл — пирĕн паян.

* * *

Мĕнле апла?
Пĕрлехчĕ-çке телей.
Ăçта, хăш вăхăтра,
Мĕнле çухалчĕ?
Ытла та çутăччĕ вăл
Пирĕн,
Ытла та пысăкчĕ...
Çапах çухалчĕ.
Çути
Куçа йăмăхтарса,
Суккăрлатса хăварчĕ.

## *ХĔРСЕНЕ*

Ан макăрăр, хĕрсем.
Макăрма кирлĕ мар.
Хамăр вăйсăрлăха,
Хамăр халсăрлăха
Кăтартма кирлĕ мар.

Юлтăр пĕччен — пĕлĕр чăтма,
Йывăр ăшра — пĕлĕр кулма,
Шанчăк çĕтсен — вĕренĕр тупма.
Пĕр ÿкĕнÿсĕр, пĕр кĕвĕçÿсĕр
Вĕренĕр, хĕрсем, тасан пурăнма.

## *ШУР ÇĂЛКАНЛĂ УЛĂХ*

Шур пĕлĕт евĕр тунсăх каплансассăн,
Шухăшăмпа пырап Çĕтне хĕрне.
Яланхиллех пек унта пурте: эс хавассăн
Ална тăсса чупан пек ман енне.

Ват йăмрасем пăшăлтатса ларaççĕ,
Çăлкан кăна хальччeнхинчен шăпрах.
Мĕн чул сăмах пуль хăйсенче упраççĕ.
Тен, маннă та, çÿреп, тен, кăлăхах.

Çĕтне, Çĕтне! Вăл пĕлнĕ çав, вăл сиснĕ,
Ахальшĕн-и хумханчĕ çил çукран?
Пĕр эп кăна пĕлмен, вылянă, сикнĕ,
Тĕнче хĕрне çитес пек сан хыçран.

Пытанмалла вылянă пек, кайран
пытантăн.
Тупатăп, терĕм. Тупнă-çке унччен.
Пĕр-ик хутчен малтанлăх сасă патăн...
Çайран? Шырап ĕнтĕ паян кунччен.

* * *

Ан шакка.
Эс, юрату тетĕн пулсан,
ан шакка алăкран...
Тăхта.
Вăрттăн кĕрĕн кантăкран...
Юратун
нихçан та çулĕ уçă пулман.
Тухнă чух?
Пĕлместĕп эп,
курман.
Илткеленĕ тăрăх,
тухнă чух —
тухать вăл уççăн
алăкран.

* * *

Шурă тутăр çыхса,
шурă питлĕ пулас
терĕм пуль
Савнăçлине савса,
савнăç курса пурнас
терĕм пуль
Шурă тутăр çыхрăм та —
пит шуралчĕ.
Савнăçлине саврăм та —
сăн çухалчĕ.

* * *

Эс мана kаланă сăмахсем
Хăвăрт ӳкрĕç чул çине,
Пĕрчĕн-пĕрчĕн пайланса,
Kусса кайрĕç.

Эс манпа тĕл пулнă вăхăтсем
Хăвăрт куçрĕç тĕлĕке,
Пĕлĕт евĕр капланса,
Иртсе кайрĕç.

* * *

Çулĕ яка терĕм те,
кăшт утрăм та —
такăнтăм.
Çынни лайăх терĕм те,
паллашрăм та —
макăртăм...

* * *

Ытла нумай ăна эс ан кала.
Вăл сӳннĕ, сивĕннĕ, пăрлак.
Ахаллĕн мĕншĕн пĕтерен хала...
Тепри кăвар ак, вĕр пăртак.

* * *

Усал тесе пытăм та —
сăпайлăх тупрăм.
Хаяр тесе пытăм та —
тăванлăх тупрăм.
Манман тесе пырсассăн,
мĕн курăп?
Савать тесе пырсассăн,
мĕн тупăп?

* * *

Эс килнине курса,
хапха уçсан,
Ку кĕтĕр терĕ пулĕ, тетĕн-им?
Чим, эс сывлана сывлăш кĕтĕр, терĕм.

Умна пырса тăрса,
куçран пăхсан,
Савни тесе сăнарĕ, тетĕн-им?
Ку манăн савнă каччă сăнлă, терĕм.

* * *

Сан куллуна курма хăнăхнăскер эп,
Йĕрсен те — кулать тесе шутларăм.
Эс савнине туйма хăнăхнăскер эп,
Ҫайсан та — савать тесе лăплантăм.

## *ЧЕЧЕК АКРĂМ*

Чечек акрăм,
Чечек акрăм,
Шăтса тухрĕ пулмалла хытă чул.

Пăхаймарăм-и,
Сапаймарăм-и,
Сивĕрех пулчĕ-ши ку çул?

Ҫулас кăмăлăм,
Савнас кăмăлăм
Патлатать пĕрмай чул çине.

Эс курмастăн-и,
Эс сисместĕн-и,
Манăн чунăм çуннине.

Чечек парăттăм,
Чечек парăттăм,
Шăтайман пулсан, мĕн парам?

Эс хавасла-и,
Пурте лайăх-и?
Сан телейшĕн хăть савăнам.

## ТУПМАЛЛИ


Асӑнмалӑх . . . . . 3
«Ҫӗр те ҫичӗ юрӑ, ҫитмӗл ҫичӗ ҫул...» 4
«Хисеп те кирлӗ...» . . . . . —
«Тӗнче анлӑ тенине илтсен...» . . . 5
«Анне!..» . . . . . —
Парӑм . . . . . . 6
Юрамасть юлма . . . . . —
«Ятлӑ ҫыннӑн ятлӑхӗ...» . . . . 7
«Ҫӑкӑр умне пырсан...» . . . . 8
«Хура Шурра калать...» . . . . —
«Эп тунӑ йӑнӑшсемшӗн мана эс айӑплатӑн...» . . . . . . . 9
«Вӗренесчӗ...» . . . . . . —
«Ултавлӑх...» . . . . . 10
«Кӗвӗҫ ҫынсемшӗн...» . . . . —
«Суя сӑмахсем каласа...» . . —
Шурӑ-шурӑ кӑвакарчӑн . . . 11
Пӗлетӗп эп . . . . . . 12
«Эп хам хаваслӑха...» . . . . —
«Хӑшсем — ҫынсен чунне кӗреҫҫӗ...» . 13
«Шӑнса кайнӑ этем хурӑна касса ячӗ...» . . . . . . . —
Ҫынсем пӗрле пулаҫҫӗ . . . . 14
«Хӑшпӗр ҫынсем шавах чееленеҫҫӗ...» 15
«Такӑнсан...» . . . . . . —
«Вӗҫсе пӑхма пулать...» . . . —
Асӑрхаттару . . . . . . 16

«Эс, тутăх, мĕншĕн...» . . . . 17
«Шурă парăс — ĕмĕт...» . . . . —
«Чĕрене алăк пек...» . . . . —
«Ыйтса илес...» . . . . 18
«Пĕрре çеç мар эп курнă...» . . 19
«Кĕсменсĕр кимĕ юхрĕ...» . . —
Тупăн-ши? . . . . . . —
«Сарă хĕрсем иртеççĕ...» . . . 20
«Ыттисемпе пĕрлех вĕçетчĕ...» . 21
«Ҫашни утăма...» . . . . . 22
«— Пĕлетĕн-и, эсĕ, пĕчченлĕх...» . —
«Таçта, шалта...» . . . . . 23
«Айван чух шутлаттăмччĕ...» . . 24
«Ман çине пăхать те пурнăç...» . —
Хумсем... Хумсем... . . . . . 25
«Хăрнă,— терĕ...» . . . 26
«Ылтăн тупрăм...» . . . . . —
Иккĕленӳ . . . . . . —
Ҫăвайт çунать . . . . . 27
«Вăрман. Уçланкă...» . . . 28
Тиха . . . . . . . —
«Тахçантанпах юратнă кĕвĕ...» . 29
Кулăр манран . . . . . —
Шăплăх . . . . . . . 30
«Пурнăç — шурлăх пек вăл...» . 31
«Чĕрем...» . . . . . . —
Пулаççĕ çавăн пек çынсем . . 32
Ҫалаç . . . . . . . —
Ҫамрăклăх-шуçăм . . . 33

«Лăпкă кӳлĕ, тарăн кӳлĕ...» . . . 34
«Кăштах ăнлантăм пурнăçа...» . . . 35
Шăплăхри юмах . . . . . —
Пурнăç . . . . . . . . 36
«Çук, ан сӳнтер...» . . . . . . 37
«Çулĕ вăрăм, ай, çул вăрăм...» . 38
«Шартламаччĕ, сивĕччĕ...» . . . —
Ҫалам-и? . . . . . . . 39
Çухалнă юрă . . . . . . . 41
«Вăхăт çук пулсан та — çук канăç...» 42
«Юратăвна кашкăрсене шанса патăн та...» . . . . . . . . . —
«Хурлăх пулсан...» . . . . . . —
«Эс маншăн пĕрре мар...» . . . 43
«Сĕтел ури авăнать...» . . . . . 44
«Çунакан вутпуçне çунтăр тенĕ çĕртенех...» . . . . . . . . 45
«Чăннипех, çапла пĕр каçпа...» . 46
«Ҫаллех çав кĕвĕ...» . . . . —
Кĕтет. . . . . . . . . 47
«Сар чечексем çинчен калаççĕ тĕрлĕ...» 48
«Аслати авăтмарĕ. Çумăр çумарĕ...» —
«Çитмĕл те çичĕ...» . . . . . 49
Ян ятлăр . . . . . . . . —
«Тĕрлĕрен вĕрентеççĕ çынсем...» . 50
«Эп — пĕчĕк юр пĕрчи...» . . . . —
Лĕпĕшсем выляççĕ, тытмалла выляççĕ...» . . . . . . . . 51
«Çырусем çырмарăн, терĕн...» . . . —

«Ман валли ятсем эс ан шыра...» . 52
«Асамат кĕперĕпе...» . . . . . —
«Эс юрлакан юррăн вĕçĕ пулăп...» . 53
«Тĕтре...» . . . . . . . . —
Қаян пулсассăн... . . . . . 54
«Чĕре хĕлĕхне тĕкĕнсе...» . . . . —
«Мĕнле апла?..» . . . . . 55
Хĕрсене . . . . . . . . —
Шур кăлканлă улăх . . . . 56
«Ан шакка...» . . . . . . . 57
«Шурă тутăр çыхса...» . . . . —
«Эс мана калаңă сăмахсем...» . . 58
«Çӳлĕ яка терĕм те...» . . . . —
«Ытла нумай ăна эс ан кала...» . —
«Усал тесе пытăм та...» . . . . 59
«Эс килнине курса...» . . . . —
«Сан куллуна курма хăнăхнăскер эп...» —
Чечек акрăм . . . . . . 60

10 пус

*Для детей старшего возраста*


Любовь Васильевна Мартьянова

ПЛАМЕНЬ СЕРДЦА МОЕГО
Стихи

На чувашском языке

ИБ 1075

Редактор Р. В. Бородкина
Художник Л. Я. Павлов
Художественный редактор Е. Е. Михайлова
Технический редактор А. Ф. Никитина
Корректор Р. К. Куприянова

Сдано в набор 21.08.81. Подписано к печати 29.12.81. НТ 08052. Формат 60X90/32. Бумага типографская № 1. Гарнитура литературная. Печать высокая. Физ. печ. л. 2,0. Учетно-изд. л. 1,92. Тираж 1000 экз. Заказ № 4164. Изд. № 94. Цена 10 коп.

Чувашское книжное издательство. Чебоксары, пр. Ленина, 4.

Типография № 1 Государственного комитета Чувашской АССР по делам издательств, полиграфии и книжной торговли. Чебоксары, Канашское шоссе, 15.